Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

91 (7622) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи ноябрĕн (чӳк) 19-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


Раççейре

## Пирĕн республика Раççей грантне тивĕçнĕ

РФ Правительстви федераци субъекчĕсен пĕлтĕрхи ĕç кăтартăвĕсемпе ĕç тăвакан влаç органĕсене грантсем уйăрнă. Пĕтĕмпе 20 субъекта грант пама йышăннă.

Чăваш Ен çак списокра Тюмень облаçĕ хыççăн иккĕмĕш вырăнта тăрать. Республика чылай региона – Краснодар крайне, Самар облаçне, Санкт-Петербург хулине, Тутар Республикине, Ханти-Манси автономи округне, Мускав хулине тата ыттисене кая хăварса 205 миллион тенкĕлĕх грант хуçи пулса тăнă.

Грант пама регионсен социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн чылай кăтартăвне тишкернĕ: экономика ӳсĕмне, тупăша, халăх сывлăхне, пурăнмалли çурт-йĕр тунине, çынсене хăрушсăрлăхпа тивĕçтернине, патшалăх тата муниципалитет управленийĕн йĕркелĕвне, бюджетри укçа-тенкĕпе тупăшлă усă курнине.

Районăн пултаруллă çыннисем

## Çĕр-çĕр çынна пулăшнă



***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Андрей Аркадьевич Сергеев аслă фельдшер Муркашри тĕп больницăн васкавлă пулăшу уйрăмĕнче вăй хурать. Сывлăх хуралĕнче вăл çирĕм çул ытла ĕнтĕ – 1986 çултанпах. Çав вăхăтранпа фельдшер районти çĕр-çĕр çынна вăхăтра медицина пулăшăвĕ панă, тĕрлĕ чирсенчен сипленме пулăшнă. Хăйĕн ĕçне яланах пысăк пахалăхпа тата çынсем умĕнчи яваплăха туйса пурнăçлать вăл. Йĕпесапа-и, шартлама сивĕ-и, ирпе ирех е çĕрле – Андрей Аркадьевич ĕç вăхăчĕ мар пулсан та ял халăхне пулăшу пама нихăçан та хирĕçлемест. Çавăнпах пуян опытлă медицина ĕçченне ĕçтешĕсем кăна мар, ялйыш та питĕ хисеплет.***

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Республикăра

## Тухăçлă ĕçлекене ытларах тӳлеме пуçлаççĕ

Тинех пĕрлехи тариф сетки (ЕТС) пăрахăçа тухать. ЧР Министрсен Кабинечĕн тунти кунхи ларăвĕнче вĕрентӳ, сывлăх сыхлавĕ, культура отраслĕнче вăй хуракансене шалу укçипе тивĕçтермелли çĕнĕ йĕркене сӳтсе явнă. Пулас документăн тĕллевĕ - бюджет тытăмĕнче ĕçлекене тĕрлĕ хушма тӳлевпе хавхалантарса тата лайăхрах ĕçлеме хистесси. Отрасльте вăй хуракан кашни специалист квалификацине, ĕç кăткăслăхне, ăна мĕнле пурнăçланине кура шалу илĕ. Должноç укçи çумне тăрăшса ĕçлекене тĕрлĕ хушма тӳлевсем параççĕ.

Унччен шалăва пурăнмалли чи пĕчĕк виçерен кая тӳлеме юраман. Малашне ун вырăнне пĕр пĕтĕм виçе – 4330 тенкĕ пулать.

– Тӳлев тытăмне çĕнĕлле йĕркелени ăста та пултаруллă, тăрăшуллă çынна тивĕçлĕ шалупа тивĕçтерме пулăшĕ. Халиччен кун пекки пулманччĕ, – палăртнă Николай Федоров президент.

Йышăну

## Бюджет проектне сӳтсе яваççĕ

Муркаш районĕн Уставĕн 14-мĕш статйипе тата депутатсен районти Пухăвĕн 2005 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнчи С-2/1 № йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ пĕрле сӳтсе явассин положенийĕпе килĕшӳллĕн район администрацийĕн пуçлăхĕ 2008 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче 636 № йышăну тунă.

Депутатсен районти Пухăвĕн «Муркаш районĕн 2009 çулхи бюджечĕ çинчен» йышăнăвĕн проектне сӳтсе явасси 2008 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче пулать, 11 сехетре пуçланать.

**Районăн 2009 çулхи бюджечĕн проекчĕпе хаçатăн паянхи номерĕнче 3-4 страницăсенче паллашма пултаратăр.**

Информаци кунĕ

## Паянхи пĕлтерĕшлĕ ыйтусемпе

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче районта черетлĕ информаци кунĕ иртет. Унăн теми – РФ Президенчĕ Федераллă Пухăва янă Çыруран тухса тăракан задачăсем, граждансене социаллă пулăшу парассине лайăхлатасси, Чăваш Республикинче ялсем патне çулсем тăвасси, ял хуçалăх çулталăкĕн итогĕсем, усă курман çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртесси.

Конкурс

## Пултаруллă хĕрарăмсене палăртĕç

«Чăваш Енри хĕрарăм-предпринимательсен ассоциацийĕ» хĕрарăм-ертӳçĕсен конкурсне ирттерет.

Документсене çак адреспа тăратмалла: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 15-мĕш çурт, приемнăй. Çыхăнмалли телефон: 62-38-40.

Районти пултаруллă хĕрарăм-ертӳçĕсем хăйсене республика тата çĕршыв шайĕнче лайăх енчен кăтартасса шанас килет.

Аталану çулĕпе

## Н. ФЕДОРОВ: «2009 çул Чăваш Енре Ял хуçалăх çулталăкĕ пулмалла»

Ноябрĕн 14-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров Ял хуçалăхĕнче тата продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунне халалланă савăнăçлă пуху ĕçне хутшăннă. Республика пуçлăхĕ ял ĕçченĕсене хăйсен професси уявĕпе саламланă, 2009 çул Чăваш Енре Ял хуçалăх çулталăкĕ пулмаллине пĕлтернĕ. «Эсир пархатарлă ĕçе – Раççей Федерацийĕн, тăван Чăваш Республикин кашни çыннине çăкăрпа тивĕçтерессине калама çук пысăк тӳпе хыватăр. Эсир ырми-канми вăй хунипех ĕнтĕ республика питĕ пысăк çитĕнӳсем тăвать»,– тенĕ Николай Федоров. Президент çавна та палăртнă. Финанс рынокĕнче пулса тăнă лару-тăрупа тăван еншĕн юрăхлă усă курмалла: «Ĕненме йывăр пулин те, тĕнче экономикин кризисĕ пире, Чăваш Енре пурăнакансене, эффективлă ертсе пырассин стратегине пурнăçа кĕртме тата пирĕн республикăн конкурентлăхне, чăвашсен агробизнесне аталантарма, вăл шутра пысăк квалификациллĕ те ответлă инвесторсене явăçтарма май парать. Çитес çул ансат пулас çук, анчах та ĕçлеме пĕлекене, камăн пĕлӳ çителĕклĕ, кам чăннипех Тăван çĕр-шыва юратать, вĕсене йывăрлăхсем çирĕплетĕç кăна».

Республикăра хальхи вăхăтра ялта ĕçлеме пур майсене те туса панă. Газ кĕртнĕ, тĕслĕх библиотекăсем пур, çемье врачĕн офисĕсене уçнă, хальхи шкулсем, бассейнсемлĕ спорт керменĕсем, кашни ял патне çити асфальт сарнă çулсем пур. Çакă пĕтĕмпех ял пурнăçне инвестицисем хывма, агропромышленность комплексне аталантарма май парать.

ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх, иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, 2008 çулхи вунă уйăхра ял хуçалăх продукцине туса илессин индексĕ 107,6 процентпа танлашнă. Республикăра хальхи сысна ĕрчетекен комплекссемпе сĕт-çу фермисен шучĕ ӳснĕ. «Агропромышленность комплексне аталантарасси» наци проектне пурнăçа кĕртме тытăннă май Чăваш Енре ял хуçалăхне аталантарма 14 миллиард тенкĕне яхăн хывнă, аталану тăнăçлăхне сыхласа хăварнă.

«Умра амбициллĕ, çапах та шухăшласа палăртнă плансем. Эпир тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсене, çĕр улмине пĕршер миллион тонна пухса кĕртме пултаратпăр. Пĕрле пулсан эпир çак пысăк кăтартăва тума пултаратпăрах!»– палăртнă Николай Федоров.

Ноябрĕн 20-мĕшĕ – Пирус туртмасăр пурăнмалли пĕтĕм тĕнчери кун



## Çак сиенлĕ йăларан хăтăлмаллах

Сывлăх сыхлавĕн пĕтĕм тĕнчери организацийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Раççейре кашни виççĕмĕш çын пирус туртать. Çав хушăрах тĕнчери аталаннă çĕр-шывсенче çак сиенлĕ йăларан хăтăлса пыраççĕ.

Пирĕн патшалăх та ку енĕпе тĕнчери конвенцие алă пусрĕ. Çапла çак сиенлĕ йăларан хăтăлассипе малтанхи утăмсем турĕ. Халĕ ĕç вырăнĕнче, халăх пуçтарăнакан вырăнта тĕтĕмлеме юрамасть.

Пирус туртнине пула сывлăх хавшани, тĕрлĕ чир-чĕр пуçланни, çынсем пурнăçран уйрăлни пирки паян калаçмăпăр. Ăна кашниех аван пĕлет.

Çак сиенлĕ йăла кĕсьене çӳхетни пирки шутласа пăхар. Пирĕн республикăра кашни виççĕмĕш çын пирус туртать пулсан, куллен чăвашсем 13 миллион тенкĕ тĕтĕмпе вĕрсе кăларса яраççĕ. Уйăхне çак укçа 400 миллион тенкĕпе танлашать. Çулталăкра – 5 миллиард тенкĕ.

Кашни яла – çул

## Комисси çулсене тĕрĕсленĕ

Чăваш Республикин Президенчĕн «Чăваш Республикинче автомобиль çулĕсен сетьне туса пĕтерессине хăвăртлатмалли мерăсем çинчен» Указĕпе килĕшӳллĕн юлашки 2 çулта пирĕн районти 36 ял патне асфальт çул тума палăртнăччĕ. Кăçал ку ĕç вĕçленет. Палăртмалла, хăш-пĕр çулсене тума пĕтĕм тĕнчери финанс компанийĕн укçа-тенкипе усă курнă. Пирĕн районти Вăрманкас Хачăка, Хопкĕпере, Чăршăна, Анаткассине, Çеçмере каякан çулсене те шăпах çав укçа-тенкĕпе тунă.

Уйăрнă укçа-тенкĕпе тĕллевлĕн усă курнă-и? Çак ыйту хуравне тупма пирĕн района иртнĕ шăмат кун Чăваш Республикин Хула тăвассин тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин министрĕн çумĕ А.И. Лепилин, Чăваш Республикин Минстройăн «Чувашупрдор» республикăри патшалăх учрежденийĕн директорĕ В.А. Атрохов, «Чувашавтодор» акционерсен уçă обществин генеральнăй директорĕн çумĕ В.В. Объедков, МФК урлă финанслакан департаментăн аслă инженерĕ Назаид Куриши килчĕç. Вĕсем район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçипе В.Г. Никитинпа пĕрле Хопкĕпере, Апчара, Чуманкассине, Ильинка ял тăрăхĕнчи Хыркассине каякан çулсем çинче пулса курчĕç. Килнĕ хăнасем уйăрнă укçа-тенкĕпе тĕллевлĕн усă курнине палăртрĕç.

**Л.ПАВЛОВА.**

Юбилей

## *Саламлатпăр*

Пирĕн юратнă кинĕме, аннене, хисеплĕ хунямана, кăмăллă асаннене, ытарайми тăвана – Муркашра пурăнакан **Вера Германовна НИКИТИНАНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн юратса та хисеплесе саламлатпăр.



Кĕркунне пек тулăх пултăр ĕмĕрӳ,
Чир мĕнне ан пĕлтĕр сывлăху.
Тату пултăр ĕмĕр пурнăçу,
Такăр пултăр яланах çулу.
Тав сана пуриншĕн те чунтан,
Эсĕ хаклă кĕмĕл-ылтăнран,
Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма татах вăй-хал парать.

**Саламлаканĕсем: хунямăшĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

---



Хамăрăн юратнă çыннăмăра, мăшăра, аннене, кукамая – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Любовь Вениаминовна ПУГАЧЕВАНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр, ăш сăмахсем калатпăр, ырлăх-сывлăх, нумай-нумай пурăнма сунатпăр. Çак çуралнă кун телей кӳтĕр сана кунран-кун. Савнă мăшăр пултăр юнашар, савăнăçпа тултăр пурнăçу. Нумай çул ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕпе икĕ кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, икĕ мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**



Поздравляем маму, бабушку, прабабушку – **ЛЕБЕДЕВУ Полину Васильевну** с юбилеем – 70 летием.

Желаем тебе крепкого здоровья.
Побольше светлых счастливых дней.
Пусть жизнь будет наполнена любовью,
Заботой близких и теплом детей.

**С поздравлением: дети, внуки, правнуки, дочери, зятья, родственники, друзья.**

---

Ярапайкасси ял тăрăхне кĕрекен Кӳстерек ялĕнче пурăнакан **Зоя Яковлевнапа Михаил Валериянович МАКАРОВСЕНЕ** кĕмĕл туй ячĕпе чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Сире çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр. Пирĕншĕн яланах эсир ыра кăмăллă пулнă, малалла та çаплах пулăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕ, хăти-тăхлачи, тăванĕсем, Макаровсен, Семеновсен çемйисем.**

---



Юратнă çыннăмăра, Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Анатолий Петрович ПАВЛОВА** юбилей ячĕпе саламлатпăр. Тав тăватпăр санăн ыра кăмăлушăн. Сывлăху сан юман пек çирĕп, кун-çулу вăрăм пултăр. Эпир вара саншăн, хамăрăн чи çывăх çыншăн, яланах савăнатпăр, сана юрататпăр, çĕр çинчи мĕн пур ырлăха сунатпăр. Эсĕ пирĕншĕн нумай ыра ĕç тунине асра тытса, тав туса çак уяв кунĕнче çĕре çити пуç таятпăр, эпир санпа мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе ывăлĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**